28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
8
ШАМАТКУН
238 (6989) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) Обкомĕпе
Шупашкар хула комитечĕн,
ЧАССР Верховный Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Хĕллехи агротехника ĕçĕсем

Килес çул вăйлă тырпул туса илес тесен, хĕллехи вăхăтра та нумай вăй хурса ĕçлес пулать. Хĕллехи ĕçĕн тухăçлăхĕ çулла палăрать. Пирĕн республикăри нумай колхозсем Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç, малта пыракан агротехникăна çине тăрса пурнăçа кĕртсе пычĕç. Çавна пула тырпул тухăçлăхне вăрçăченхи виçере тытса тăчĕç кăна мар, чылай ӳстерчĕç те. Уйхир ĕçĕсен пахалăхне самаях лайăхлатрĕç. Кун пек колхозсен шутне Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза, Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоза, Комсомольски районри «Трактор» колхоза, Сĕрпӳ районĕнчи «Луч» колхоза тата ытти чылай колхозсене кĕртмелле.

Анчах хăшпĕр районсенче, колхозсене çителĕксĕр ертсе пынă пирки, нумай колхозсем тырпул тухăçлăхĕшĕн кĕрешес ĕçе вăйсăрлатрĕç, уйхир ĕçĕсен пахалăхне чакарчĕç, вырăнти удобренисене пухса вĕсемпе тĕрĕс усă курассишĕн кĕрешмеççĕ, вăрлăхсене акма кирлĕ пек хатĕрлемеççĕ, кĕрхи тырă калчисене хĕллене çуркуннехи тапхăрсенче пĕтессинчен сыхласа хăварассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, хĕллехи вăхăтпа агротехникăн паха ĕçĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе усă курмаççĕ.

1945 çулта вырăнти удобренисем пухас тата вĕсемпе усă курас ĕçе, кĕрхи тырă калчисене хĕллехи вăхăтра пăхас ĕçе Кувакино, Улатăр, Пăрачкав районĕсенче уйрăмах япăх организациленĕ. Сăмахран, Кувакино районĕнче хире тислĕк кăлармалли плана 47 процент, кĕл пухмалли плана 60 процент, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалли плана 16 процент, юр тытмалли плана 52 процент кăна тултарнă. Торф хатĕрлеме вара районри колхозсем пачах та тытăнман. Улатăрпа Пăрачкав районĕсенче те ĕçсем çавнашкалах пулнă.

Чи кирлĕ агротехника ĕçĕсене çавăн пек япăх пурнăçа кĕртсе пынине пула, чылай колхозсем начар тырпул туса илеççĕ, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана пурнăçа кĕртмеççĕ, колхозсемпе колхозниксен экономикине хавшатаççĕ.

Нумаях пулмасть Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак ыйтăва пăхса тухса, хĕллехи агротехника ĕçĕсен планĕ çинчен ятарласа решени йышăнчĕç. Совнаркомпа Обком республикăри çĕрĕç органĕсене, райсовет исполкомĕсене тата парти райкомĕсене агротехника ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе çирĕп кăтартусем парса хăварчĕç.

Эпир мирлĕ строительство тапхăрне кĕтĕмĕр. Сталинла тăваттăмĕш пилĕкçуллăх вăхăтĕнче социализмла ялхуçалăхĕ умне çав тери пысăк задачăсем тухса тăраççĕ. Пирĕн пухса илекен тырпулăн пĕтĕм хисепне нумай хут ӳстермелле. Вăйлă тырпул туса илмелли агротехника ĕçĕсем çине сӳрĕк пăхнине пуçĕпех пĕтермелле.

Совнаркомпа парти Обкомĕ хĕллехи вăхăтра вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттармалли плана çирĕплетсе пачĕç. Çав план тăрăх пирĕн çак хĕлте 1.300 пин тонна тислĕк, 56.000 тонна торф хатĕрлесе турттармалла, 90.000 центнер кĕл, 60.000 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлемелле, 65.000 тонна компост хывмалла.

Райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсен тислĕкпе вырăнти ытти удобренисене пухса хатĕрлес тата вĕсемпе усă курас ĕçри пысăк çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Тислĕкпе ытти удобренисене ытларах пухса колхоз уйхирĕсене турттарас, ку енĕпе плана пĕр пăркаланмасăр тултарас тесен, хĕллехи вăхăтпа туллин усă курса юлас пулать. Удобрени турттарма кашни колхозрах çителĕклĕ таран лашасемпе колхозниксене уйăрса хумалла. Вырăнти удобренисем хатĕрлес ĕçе ертсе пыма ответлă çынсем уйăрас пулать. Ку ĕçре колхозсене райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сенчи тата ытти организацисенчи агрономсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Кашни колхозрах агрономсемпе пĕрле вырăнти удобренисемпе усă курмалли плансем палăртса хумалла.

Тислĕке сапаланса пĕтме памалла мар. Кашни колхозрах выльăх витисемпе лаша витисем патĕнче тислĕк пухса пымалли, тислĕк шĕвекĕ пухăнса тăмалли вырăнсем тумалла. Торфпа кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тырпула пысăк усă кӳрессĕ.

Колхозсенче торфпа тислĕк, торфпа фекали компосчĕсемпе ытти тĕрлĕ компостсем тумалла. Кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне колхозсен тата колхозниксен килĕсенчен пухмалла, çавăн пекех вăрмантан кĕл турттарассине йĕркелемелле.

Колхозниксене вырăнти удобренисем пухса турттарас ĕçре хавхалантарма Чăваш АССР Совнаркомĕпе парти Обкомĕ 1944 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕнче йышăннă решенире кăтартнă майсемпе анлăн усă курас пулать.

Кăçалхи кĕркунне кĕрхи тырă калчисемшĕн çанталăк лайăхах пулмарĕ. Çавăнпа та хĕллехи вăхăтра юр тытни тырăпа курăк калчисене шăнса пĕтессинчен сыхласа хăварас тĕлĕшпе уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кăçалхи хĕлле пирĕн пурĕ 150.000 гектар çинче юр тытса хăвармалла. Райисполкомсемпе парти райкомĕсен, колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсен çак ĕç çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла, пур колхозсен уйхирĕсенче те, уйрăмах сăртлă вырăнсенче юр тытассине халех организацилемелле. Кĕр тырри калчисем çинче юр хулăмĕшĕ 20 сантиметртан кая пулмалла мар. Юр тытас ĕçре пур майсемпе те — шитсемпе, çапăпа, улăмпа анлăн усă курмалла. Хирте юр мĕнле пухăнса пынине тăтăшах сăнаса тăрас пулать. Юр пухăннă май шитсене вырăнтан вырăна куçарса лартмалла. Юр пĕр çĕре нумай купаланса каяссинчен тата сивĕ кунсенче кĕрпеклĕ юра çил вĕçтерсе каяссинчен сыхланмалла.

Совнаркомпа парти Обкомĕ çуркунне акма кирлĕ вăрлăхсене тасатса сортламалли плана пăхса тухса çирĕплетнĕ. Райисполкомсемпе парти райкомĕсен тата çĕрĕç органĕсен ку енĕпе ВКП(б) Обком бюровĕ «Колхозсенче вăрлăх фончĕсем хывас ĕç мĕнле пыни çинчен» кăçалхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле. Вăрлăх сортласа тасатас ĕçе халех тытăнас пулать. Вăрлăх сортламалли машинăсене пурне те юсамалла, вăрлăх тасатас тĕлĕшпе ĕçлекен обозсем организацилемелле, обозсене ертсе пыма шанчăклă та пуçарулла колхозниксене уйăрса лартмалла, вĕсене маршрутсемпе задачисем палăртса памалла. Вăрлăх тасатмалли машинăсем çителĕксĕр пулсан, аласемпе анлăн усă курмалла, вăрлăха алăпа суйлассине йĕркелемелле. Пур вăрлăхсене те хăвăртрах тасатса, акмалли кондицине çитермелле. 1946 çулхи мартăн 15-мĕшĕччен вăрлăхсене термически майпа имçамласа сиплемелли оборудование хатĕрлесе çитермелле, кирлĕ таран имçамсем тупса хумалла, çуртсемпе кадрсем хатĕрлемелле. 1946 çулхи çуркунне пĕр тырра та имçамламасăр акмалла мар.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата райисполкомсен вăрлăхсене тĕрĕслемелли лабораторисене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла, вĕсем валли вутă, çутмалли хатĕрсем тупса памалла, çапла вара вăрлăх фончĕсене тĕрĕслес ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пырас пулать. Вăрлăхсене, уйрăмах нӳрĕ вăрлăхсене хĕллехи вăхăтра сыхласа усрас тĕлĕшпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн колхозсене техникăллă кăтартусем памалла.

Чылай çĕрте пахчаçимĕçсемпе махорка калчисене парниксенче пăхса çитĕнтерес ĕç юлашки вăхăтра япăхса кайнă. Ку çитменлĕхе кăçал пĕтермелле. Пахчаçимĕçсене иртерех лартса тăвас, пахчаçимĕçпе махорка калчисене ытларах пăхса çитĕнтерес тесен, хĕллехи вăхăтра парник рамисем, çĕрĕк тăпра, лайăх тислĕк, улăм кĕççесем çителĕклĕ таран хатĕрлесе хурас пулать. Парник хуçалăхĕ мĕнле тăнине мĕнпур колхозсенче декабрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр тĕрĕслесе тухмалла, парниксене юсас тĕлĕшпе тĕрĕслӳ вăхăтĕнче тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Парниксем çителĕксĕр пулсан, ăшă йăрансем тумалла.

Совнаркомпа Обком хăйсен решенийĕнче панă кăтартусем тăрăх райисполкомсемпе парти райкомĕсен кашни колхоз валли хĕллехи агротехника ĕçĕсен планне палăртса памалла, колхозсенче вара уйхир бригадисемпе звенисене татăклă заданисем памалла, çав плансемпе заданисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла.

Хĕллехи вăхăтпа май килнĕ таран туллинрех усă курса, агротехникăн паха та пысăк ĕçĕсене тĕплĕн пурнăçа кĕртер, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн халех вăйлă кĕрешӳ пуçарса ярар!

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ РЕСПУБЛИКИ ТУСЛĂХПА СОЮЗ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОГОВОРА ТАТА СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ РЕСПУБЛИКИ КИТАЙРИ ЧАНЧУНЬ ЧУГУН ÇУЛĔ ÇИНЧЕН ТАТА ПОРТ-АРТУРПА ДАЛЬНИЙ ПОРЧĔ ПИРКИ ТУНĂ КИЛĔШӲСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТНИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ГРАМОТĂСЕНЕ ПĔР-ПĔРНЕ ПАРСА УЛĂШТАРНИ

1945 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче Чунцинь хулинче Совет Союзĕн Китайри чрезвычайнăй тата полномочнăй послĕ А. А. Петров тата Китай республикин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе Совет Союзĕпе Китай республики туслăхпа союз çинчен тунă договора тата Совет Союзĕпе Китай республики Китайри Чанчунь чугун çулĕ çинчен тата Порт-Артурпа Дальний порчĕ пирки тунă килĕшӳсене, Мускав хулинче 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче алă пуснăскерсене тата СССР Верховный Совечĕн Президиумĕпе Китай республикин халăх правительстви 1945 çулхи августăн 24-мĕшĕнче çирĕплетнĕскерсене, ратификацилени çинчен калакан грамотăсене пĕр-пĕрне парса улăштарнă.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандитатсем тăратаççĕ

ШУПАШКАР ХУЛИНЧЕ

Хулари предприятисемпе учрежденисенчи рабочисемпе служащисен коллективĕсем участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем хăйсен пухăвĕнче участокри суйлав комиссийĕн составне Кузьма Сергеевич Сергеев писателе кандидата тăратнă. Сергеев юлташ Чăвашрадиокомитетăн главнăй редакторĕ пулса ĕçлет.

Шупашкарти ача çуратмалли çуртра ĕçлекенсен коллективĕ участокри суйлав комиссийĕн составне Ю. Я. Нефедова юлташа кандидата тăратнă. Нефедова юлташ акушерка пулса ĕçлет, хăйĕн ĕçне вăл лайăх туса пырать, обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнать.

Партин Шупашкарти чăвашла вăтам шкулти пуçламĕш организацийĕ Анфиса Никитична Волкова юлташ кандидатурине тăратнă. Волкова юлташ 22 çул хушши ĕнтĕ халăха çутта кăларас ĕçре ĕçлет. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ăна лайăх ĕçленĕшĕн Хисеплĕ грамотăпа наградăланă, Совет правительстви «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе наградăланă.

ИШЛЕЙ РАЙОНĔНЧЕ

Ишлей районĕнчи обществăллă организацисемпе ĕççыннисен обществисем участокри суйлав комиссийĕн составне кандидатсем тăратас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн районри организацийĕ участокри суйлав комиссийĕн составне Ишлей-Покровскинчи вăтам шкул директорне Анатолий Андрианович Воронцов орденоносеца, Çĕньял-Покровскинчи 7 çул вĕренмелли шкул учительне Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учительне Панфил Афанасьевич Ефремов юлташа кандидата тăратнă.

Салапайкасси ял Советне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем «Агроном» колхоз членне Емельян Николаевич Тихонов юлташа, Крупская ячĕпе тăракан колхоз членне 65 çулти Андрей Герасимович Долгов юлташа, «Акара» колхоз членне Федор Иванович Иванов юлташа кандидата тăратнă.

Андреев ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем участокри суйлав комиссийĕн составне Василий Филиппович Толстов, Сергей Егорович Орлов, Мария Сергеевна Сергеева юлташсен кандидатурисене тăратнă.

Эпир суйлава мĕнпе хатĕрленетпĕр

СССР Верховный Советне суйламалли Положени пичетленсе тухсанах эпир çамрăк суйлавçăсем хушшинче ĕçлес тĕлĕшпе çирĕп план турăмăр. Ĕçе чи малтанах агитаторсене вĕрентсе хатĕрлессинчен тытăнтăмăр. Çав майпа комсомол организацийĕсен секретарĕсен тата комсомол активĕн районри канашлăвне ирттертĕмĕр. Унта ВКП(б) райкомĕн секретарĕ И. Долгов юлташ СССР Верховный Совечĕн çитес суйлавĕпе çамрăк агитаторсен задачисем çинчен доклад туса пачĕ.

ВЛКСМ райкомĕн бюровĕнче агитаторсен составне пăхса тухса çирĕплетрĕмĕр. Агитаципе пропаганда ĕçне лайăххрах туса пыма хастарлă комсомолецсемпе çамрăксенчен тата 50 çынна агитатор пулса ĕçлеме уйăртăмăр. Вĕсене малтан суйлав законне, Сталинла Конституцие тĕплĕн вĕрентрĕмĕр. Çапла вара районра агитаципе пропаганда ĕçне 386 агитатор, вĕсенчен 112 комсомолец хастарлăн хутшăнчĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксем Сталинла Конституципе суйлав Положенине кружоксенче вĕренеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхозсенче ятарласа 59 кружок организациленĕ, вĕсенче пурĕ икĕ пине яхăн çамрăк вĕренет. Кружок занятийĕсем эрнере пĕрре е иккĕ пулса иртеççĕ. Занятисене учительсем е коммунистсемпе комсомолецсем ирттереççĕ. Унсăр пуçне, агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем суйлавçăсем патне килĕрен çӳресе суйлав законне ăнлантараççĕ. Агитаторсем калаçусене лайăх хатĕрленсе ирттернине пула вĕсене кашни килтех хаваслăнса кĕтсе илеççĕ. Калаçусем хыççăн нумай ыйтусем парса ыйтса пĕлеççĕ.

Нăрваш-Шăхаль ял Советĕнче пирвайхи хут суйлава хутшăнакан çамрăксем пурĕ 175 çын шутланаççĕ. Вĕсем Сталинла Конституци панă суйлав правипе малтанхи хут усă кураççĕ. Агитаторсем çамрăк суйлавçăсен пухăвне ирттернĕ, суйлава мĕнле хатĕрленмелли çинчен калаçа панă. Халĕ ку ял Советĕнчи колхозсенче 35 агитатор ĕçлет. Вĕсем кашни суйлавçа Положение тĕплĕн ăнлантараççĕ. Кунти агитаторсем агитмассăллă ĕçĕн нумай енлĕ формисемпе анлăн усă курма тăрăшаççĕ. Вĕсем суйлавçăсене пухса, Сталин юлташ Советсен VIII-мĕш Чрезвычайнăй съездĕнче тунă доклада çырса илнĕ пластинкăсемпе итленĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра 62 çамрăк пирвайхи хут суйлава хутшăнать. Вĕсене суйлав законĕпе паллаштарма комсомол организацийĕ икĕ кружок тунă. Занятисем кашни эрнерех йĕркеллĕ пулса иртеççĕ.

Суйлав кунне хатĕрленнĕ май районри культпросвет учрежденийĕсен ĕçĕ те нумай лайăхланчĕ. 25 вулав çуртĕнчен 9-ăшĕнче комсомолецсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса, хастарлăн тăваççĕ. Уйрăмах Каншелĕнчи, Пăлапуç Пашелĕнчи вулав çурчĕсем лайăх ĕçлепине палăртмалла. Кунта вулав çурчĕсене илемлетнĕ, хĕллене пур енчен те лайăх хатĕрлесе çитернĕ. Колхозниксем вулав çуртне пухăнса тĕрлĕ докладсем итлеççĕ, çĕнĕ хаçат-журналсем вулаççĕ.

Эпир суйлав законне кружоксенче вĕреннипех лăпланмастпăр. Час-часах çамрăк суйлавçăсен пухăвĕсене, вечерĕсене ирттеретпĕр. Унта Сталинла Конституци çинчен, совет государстви çинчен докладсемпе лекцисем ирттеретпĕр. В. Максимов комсомолец çамрăк суйлавçăсен пухăвĕнче «Совет гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен», Липовкăри А. Кондратьева комсомолка «Совет влаçĕ çамрăксене мĕн пани çинчен» докладсем туса панă.

Халĕ комсомолецсемпе çамрăксем суйлав участокĕсенче хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Суйлав участокĕсенче суйлав пулса иртмелли çуртсене палăртнă. Вĕсене илемлетес, кирлĕ хатĕрсене тупас тата сасăлама пынă суйлавçăсен вăхăтне лайăх, усăллă ирттермелле тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Ял Совечĕсене суйлавçăсен списокĕсене тума пулăшас майпа ку ĕçе пултаракан комсомолецсене уйăрса панă.

Колхозсенчи комсомолец-агитаторсен ĕçне эпир куллен тĕрĕслесе, вĕсене пулăшса тăратпăр. Час-часах уйрăм агитаторсене чĕнсе илсе калаçатпăр, кăтартусем паратпăр. Ноябрĕн 24-мĕшĕнче çамрăк агитаторсен районри канашлăвне ирттертĕмĕр. Унта агитаторсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-яврăмăр, нумай агитаторсем хăйсен опычĕпе паллаштарчĕç.

Хамăр ĕçре эпир парти организацисемпе килĕшсе, районри парткабинетпа, сутĕç пайĕпе, ял Совечĕсемпе çыхăнса туса пыратпăр. Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Нумай колхозсенче художествăллă пултарулăх кружокĕсем çук, пуррисем те начар ĕçлеççĕ. Пур вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем те йĕркеллĕ ĕçлесе пымаççĕ-ха, вĕсен çумĕнче тĕрлĕ кружоксем организацилемен. Районри колхозсенче кино пулмасть. Эпир çитес кунсенчех çак çитменлĕхсене пĕтерсе суйлав кунне ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илме тăрăшатпăр.

З. НЕСТЕРОВА,
ВЛКСМ Первомайски райкомĕн секретарĕ.

Вăрман хатĕрленĕнче ĕç дисциплини сирĕп пулмалла

Вăрнарти вăрманпромхозăн Çарăклă вăрман пунктĕнче ĕçлекен хĕрачасен бригадине Анастасия Ильдуганова ертсе пырать. Хăйсен пушă вăхăтне вĕсем савăнăçлă та культурăллă ирттереççĕ. Вăрман пунктĕнчи пуçламĕш парторганизаци секретарĕ П. Ефимов юлташ вĕсене яланах çĕнĕ хаçатсем вуласа парать, вĕсемпе политикăллă калаçусем ирттерет. Нумаях пулмасть Ефимов юлташ вĕсене В. М. Молотов юлташăн историллĕ докладне вуласа панă. Халĕ кунта суйлав Положенине вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ.

Бригада членĕсем вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсĕн республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланипе ырласа, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Ăмăртура уйрăмах Анастасийăпа Анна Ильдугановăсем тата Ольгăпа Ульяна Егоровăсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен нормине кулленех 150 процент тултарса пыраççĕ.

Анчах та лайăх ĕçлекенсемпе пĕрлех бригадăра ĕç дисциплинине пăсса пыракансем те пур-ха. Васильевăпа Тарасова работницăсем ĕçрен ир тăрахса каяççĕ, е нимĕнле сăлтавсăрах ĕçе тухмасăр юлаççĕ. Акă, Тарасова работница 6 кун хушши пĕр сăлтавсăрах ĕçе тухмарĕ. Мастер Еливанов çак йĕркесĕрлĕхсене пĕлет, анчах рабочисем хушшинчи ĕç дисциплинине çирĕплетме тăрăшмасть.

Н. ЗАХАРОВ.

ВЦСПС-ăн XIV-мĕш пленумĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче ВЦСПС пленумĕнче ВЦСПС секретарĕ Е. Я. Сидоренко юлташ «Рабочисемпе служащисене сывалăх тата кантарас тĕлĕшпе профсоюзсен ĕçне лайăхлатасси çинчен» доклад туса панă

Сидоренко юлташăн докладне ирхипе касхи ларусенче сӳтсе-явнă.

Пленумра США-ри Мĕнпур славянсен конгресĕн президенчĕ Америкăри профсоюз юхăмĕн пите пысăк деятелĕ Лео Кржицкий салам каланă, ăна пленум ăшшăн кĕтсе илнĕ. (ТАСС)

Шкул ачисен хĕллехи канăвĕ

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ В. П. Потемкин юлташ панă приказ тăрăх, пур шкулсенче те ачасен хĕллехи кану вăхăчĕ декабрĕн 30-мĕшĕнче пуçланать те январĕн 10-мĕшĕнче пĕтет.

Хĕллехи кану вăхăтĕнче спорт ăмăртăвĕсемпе вăййисем пулаççĕ, шкул библиотекисем ĕçлеççĕ, театрсемпе киносене ушкăнпа кая-кая кураççĕ, концертсем, утренниксем тăваççĕ, паллă çынсемпе тĕл пулса калаçаççĕ. Шкулсемпе шкул тулашĕнчи учрежденисенче çĕнĕ çул елкисем тăваççĕ.

Ачасене асăрхаса тăмашкăн пур çав ĕçсенче те учительсен тата шкул тулашĕнчи учрежденисенчи работниксен обязательнăй йĕркепе хутшăнмалла. (ТАСС).

Коммунистсем пример кăтартаççĕ

Советски районри «Новый быт» колхозри пуçламĕш парторганизацире 8 коммунист тăрать. Парти организацийĕн йышĕ пысăк мар пулин те, вăл тăрăшнипе ялхуçалăх ĕçĕсене колхоз вăхăтра тата лайăх вĕçлерĕ. 175 гектар тырра пухса кĕртсе, авăн çапса пĕтерчĕ, государствăна тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене срокчен парса татрĕ, вăрлăх хывса хăварчĕ.

Колхоз ĕçне коммунистсем ертсе пыраççĕ. Мурзаева юлташ старши конюх пулса ĕçлет, хăй ĕçне йĕркеллĕ туса пырать. Хĕлле валли выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ, лашасем ĕрчетмелли плана тултарнă. Икĕ коммунистка кунта уйхир бригадине ертсе пыраççĕ, кладовщик тата учетчик пулса та коммунистсем ĕçлеççĕ.

Колхозри ĕçсем ăнса пыни коммунистсем пример кăтартса ĕçленинчен те нумай килет. Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ Юхтанова юлташ ертсе пыракан бригада пур ĕçре те малта пырать. Çавăн пекех Е. Шоркина коммунистка ертсе пыракан бригада та лайăх ĕçлет. Юхтановăпа Шоркинăна иккĕшне те Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп. Ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем колхозра пачах та çук. Коммунистсем политикăллă-массăллă ĕçе лайăх ертсе пыраççĕ. Колхозра тăтăшах стена хаçачĕ тухса тăрать.

«Новый быт» колхозри колхозниксем Юхтанова юлташа Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Етĕрне округĕн суйлав комиссийĕн составне кандидата тăратнă. Парторганизаци хальхи вăхăтра СССР Верховный Совечĕн суйлавне хатĕрленет. Суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе коммунистсем партире тăман юлташсене, комсомолецсене хутшăнтарнă. Агитаторсене вуншар кил уйăрса панă. Суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе халĕ кашни агитатор 3—4 заняти ирттернĕ.

Ф. СЕМЕНОВ,
ВКП(б) райкомĕн Çарĕç отделĕн заведующийĕ.

Тупăшлă утар

ЕЛЧĔК. Турханти «Звезда» колхоз хăй пуçланнăранпах хурт-хăмăр утарĕ тытать. Утар çултан çул пысăкланса пырать. Кăçал кунта 43 семье шутланать.

Утар ӳссех пыни тата унтан пысăк тупăш илни пчеловод Иван Капитонович Пупин пархатарлă ĕçленинчен килет. Вăрçă тухнă çул малтанхи пчеловод фронта кайсан, унăн ĕçне Иван Капитонович йышăннă. Вăл, çамрăкранпах хурт-хăмăр ĕçне юрататканскер, колхоз утарĕнче ĕçлеме тимлĕн тытăннă. Вăрçă çулĕсенче вăл çултан çул нумайрах пыл туса илет. 1944 çулта, сăмахран, кашни вĕллерен 38,5 килограмм пыл тухнă.

— Кăçал вара пыл пĕлтĕрхинчен сахалтарах тухрĕ, çанталăк сивĕ те çумăрлă тăни кансĕрлерĕ, тет Иван Капитонович.

Анчах та утара Пупин юлташ пултарулла ертсе пынипе, утар пыл илмелли плана кăçал та тултарнă. Кăçал 40 вĕллерен пурĕ 12 центнер та 70 килограмм пыл илнĕ. Çапла вара, кашни вĕллерен вăтам шутпа 31,7 килограмм пыл тухнă.

Хуртсене хĕл каçарма çителĕклĕ таран пыл уйăрса хăварнă хыççăн 5,26 центнер пыл колхоза панă. Колхоз правленийĕ вăл пыла ĕçкунĕ тăрăх валеçсе парать.

Пупин юлташ хурт-хăмăр ĕçне ыттисене те вĕрентет. Вăл вĕрентсе пынипе унăн помощникĕ пулса учитель А. Турхан ĕçлет. «Звезда» колхозри кашни виçĕ килрен пĕр килĕ хурт-хăмăр тытать. Иван Капитонович вĕсене кирлĕ вăхăтра пулăшу парса тăрать.

Халĕ утарти хурт вĕллисене омшаника пуçтарса лартнă. Пупин юлташ вĕсене, ытти çулсенчи пекех, тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарма тăрăшать.

Т. ИВАНОВ.

Çамрăксен вăйлă тырпул звенисем

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Кăçал районри чылай колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен вăйлă тырпул звенисем ĕçлерĕç. Халĕ вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе хăйсем мĕнле ĕçленине пăхса тухаççĕ. Чылай звеносем хăйсене çирĕплетсе панă участоксем çинчен вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе хастар ĕçленĕ. Акă, «Красное Сормово» колхозри çамрăксен вăйлă тырпул звени виçĕ гектар çинче вăрлăхлăх сĕлĕ пăхса ӳстернĕ, ăна тирпейлĕ пухса кĕртнĕ. Вĕсен вăтам шутпа кашни гектартан 18,77 центнер сĕлĕ тухнă.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозри Д. Петров юлташ ертсе пыракан çамрăксен вăйлă тырпул звени кашни гектартан 17,6 центнер сĕлĕ туса илнĕ. «Путь социализма» колхозри М. Богатеев юлташ звени 2 гектар йĕтĕн акса, кашни гектартан 9-шар центнер йĕтĕн вăрри çапса илнĕ.

Халĕ çамрăксен вăйлă тырпул звенисем çитес çулхи çуракине хатĕрленеççĕ. «Коминтерн» колхозри Петр Ивантаев юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен звени хăйĕн участокĕ çине 320 лав тислĕк кăларнă та ĕнтĕ.

Малта пыракан ферма

Муркаш районĕнчи Оринкинăри «Красное Сормово» колхоз çулран çул выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пырать. Колхоз кăçал та выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Колхозăн фермăра 9 пуç ĕне, 45 сурăх, 27 сысна плана пăхнинчен ытларах пур. Колхоз фермисен заведующийĕ пулса кунта С. Соловьев 9 çул ытла ĕçлет. Фермăра выльăхсене вăхăтра апатлантараççĕ, шăвараççĕ, тасатаççĕ, зоотехникăпа ветеринари правилисене пурнăçласа пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕх çурт-йĕрĕсене кунта çулахи вăхăтрах юсанă, ăшă тытмалла тунă. Кĕркунне выльăхсене витене тупас умĕн, кашни ферма çуртйĕрне дезинфекцилесе тасатнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли çителĕклĕ апат пур. Фермăри выльăхсене кирлĕ ута-улăма пĕтĕмпех ферма заведующийĕ Соловьев юлташ аллине акт тăрăх панă. Колхозăн çĕрулми, тымарçимĕç çителĕклĕ, унсăр пуçне 60 тонна силос пур. Фермăра ĕçлекенсем ферма çумĕнчи участокран планпа пăхнинчен кашни гектартан 170 пăт ытларах çĕрулми кăларса илнĕ. Çĕрулмине унта çанталăк лайăх тăнă чух кăларса пуçтарса хунă. Сурăхсем валли 5 центнер вĕлтĕрен пухса типĕтнĕ тата путексем валли вунă лав милĕк пухса хунă.

Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре çитĕнӳ тунăшăн фермăра ĕçлекен 11 çын ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх выльăхсем илеççĕ. Васильева, Анисимова, Павлова юлташсем пĕрер пăру илеççĕ. Пăру пăхакан орденоносец Ксения Григорьева юлташ кăçал 25 пăру пăхса çитĕнтернĕ. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх Григорьева юлташ та пĕр пăру илет. Ферма заведующийĕ С. Соловьев юлташ (ăна икĕ хутчен ЧАССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă) фермăри выльăхсене ĕрчетмелли плана ытлашши тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн икĕ пăру илет.

— Кăçал эпир хĕле лайăх хатĕрленсе кĕтсе илтĕмĕр, выльăхсене тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасса шанатпăр,—тет Соловьев юлташ.

«Красное Сормово» колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли пур тĕрлĕ обязательствăсене те срокчен пурнăçланă.

Нимӗҫсен вӑрҫӑ пуҫланӑшӑн айӑплӑ тӗп преступникӗсене Нюрнберг хулинче суд туни

ДЕКАБРӖН 4-мӗшӗнчи ИРХИПЕ КАҪХИ ЛАРУСЕМ

НЮРНБЕРГ, декабрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери ҫар трибуналӗн паянхи каҫхи ларӑвӗнче Англи айӑплаканӗ Шоукросс тухса каланӑ. Вӑл Германи Польшӑна, Югославие, Грецие, Голландие, Данине, Бельгие, Норвегие тата Францие мӗнле тапӑннине питӗ тӗплӗн каласа панӑ. Каҫхи ларура Шоукросс хӑйӗн сӑмахне малалла каланӑ.

Шоукросс ҫапла каланӑ: 1928 ҫулхи Келлог пакчӗ хыҫҫӑнхи вӑхӑтра агрессиллӗ вӑрҫӑ вӑл пӗтӗм тӗнчери правӑна хирӗҫ тунӑ преступлени пулса тӑрать, ҫавӑнпа та Германипе унӑн пуҫлӑхӗсене ҫав преступление тунӑ тесе айӑпламалла. Хӑшпӗрисем ҫапла калаҫҫӗ: ҫак судра айӑпланакансем тунӑ ӗҫсем хӑй вӑхӑтӗнче преступлени туни пулман, ҫавӑнпа та вӗсене айӑпласа ҫар трибуналӗ «закона пӑсать», теҫҫӗ. Шоукросс ҫакӑн пек калание тӗппренех хирӗҫлет. Государствӑсем хушшинчи нумай договорсене асаилтерсе, Шоукросс ҫакна кӑтартса парать: хальхи вӑрҫӑччен государствӑсем агрессиллӗ вӑрҫӑсем пуҫлама тытӑнса тӑнипе тата агрессин жертвисем пулнӑ ҫӗршывсене пулӑшассипе ҫеҫ чарӑнса тӑман. Государствӑсем агрессиллӗ вӑрҫӑсене питлерӗҫ, вӗсем агрессиллӗ вӑрҫа, урӑхла каласан, хӑйне хӑй хӳтӗлемелли е закона пӗрле пурнӑҫа кӗртмелли вӑрҫӑсӑр пуҫне, е тата договора пӑснӑ ҫӗршыва хирӗҫ пуҫласа янӑ вӑрҫӑсӑр пуҫне, пур тӗрлӗ вӑрҫӑсене те законсӑр вӑрҫӑ тесе шутлаҫҫӗ. Пӗтӗм тӗнчери право, Пӗтӗм тӗнчери ҫар трибуналӗн уставне йышӑниччен малтанах агрессиллӗ вӑрҫӑсене преступлени тесе шутланӑ. Ҫапла ӗнтӗ уставра каланисенче ку тӗлӗшпе ҫӗнни нимӗнех те ҫук. Вӑл преступленисемшӗн ответ тытмаллине ҫеҫ кӑтартса парать, уншӑн ответлӑха уйрӑм ҫынсем ҫине хурать.

Шоукросс ҫапла калать: Германи нумай государствӑсен территори тӗлӗшӗнчи пӗрлӗхӗпе политика тӗлӗшӗнчи никама пӑхӑнманлӑхне малтанах питӗ тӗплӗн шутласа тапӑннӑ. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл пур енчен те «агресси» сӑмаха пӗлтерет. Айӑплакан Германи туса ирттернӗ агрессиллӗ вӑрҫӑсем ҫинчен каласа парать. Вӑл Германи Польшӑна, Норвегие, Данине, Бельгипе Голландие, Грецие Югославие мӗнле тапӑннине каласа парать. «Ҫак айӑпланакансем, Германие тытса тӑракансем пулса, айӑпласа ҫырнин II-мӗш пайӗ тӑрӑх айӑплӑ та ӗнтӗ, — тет Шоукросс.—Ҫак ҫынсем пулӑшнипе гитлерла Германире пуҫпулса тӑма май панӑ. Ҫак ҫынсем пӗр шутлӑ пулса ӗҫлени та пулӑшни Германире нацистла правительствӑна туса хума май панӑ. Ҫак ҫынсен пултарулӑхӗпе чеелӗхӗ вӗсем тӑрӑшса ӗҫлени Германи империне договорсене чӗрсе пӑрахса ҫӗнӗ договорсем тума, унтан вара ҫав ҫӗнӗрен тунӑ договорсене те татах чӗрсе пӑрахма, пӗтӗм тӗнчери калаҫусемпе дипломатирен камит туса хума, пӗтӗм тӗнчери правӑна сума сӑвассине пӗтерсе тӑкма, тӗнчере пуҫпулса тӑрас тесе, тӗнчери халӑхсене хирӗҫ вӑрҫӑ пуҫласа яма май панӑ. Вӗсен преступленийӗ хӑшпӗр енчен те пулин нацистла Германин преступленийӗ пулсан, вӗсем вара айӑплӑ, мӗншӗн тесен вӗсем мӗн пулса иртнине тума пулӑшнӑ, ӑна хавхалантарнӑ, канашсем панӑ, тумалли майсем тупса панӑ. Халӗ ӗнтӗ, ҫак хӑрушӑ тискерлӗхе пӗтернӗ хыҫҫӑн, эпир малашне мӗнле пурӑнасси ҫинчен шухӑшлатпӑр. Ҫак ҫынвӗлеренсемпе ҫаратуҫӑсен айӑпӗ пулас ӑрусемшӗн те питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӗсем тӗнчене улталарӗҫ, ҫав ултава пула вара вӗсем хӑйсем валли вӗлермелли тата ҫаратмалли майсем туса хучӗҫ. Вӗсен чеелӗх, ултавлӑх тата икӗпитлӗх ҫинче никӗсленсе тӑракан «дипломатийӗн» историне пӗтӗм тӗнчери ҫыхӑнусене йӗркелесе пымалли вырӑнне хунӑ пулсан, цивилизациллӗ общество вара пӗтесси патне пырса тухатчӗ. Нацисем пӗр-пӗрне шанмаҫҫӗ пулсан, вӗсем мӗн калание каланӑ пек ӑнланмаҫҫӗ пулсан, вӗсем хӑйсен обязательствисене пӑсаҫҫӗ пулсан, вара мирпе хӑрушсӑрлӑхӑн ниепле шанчӑкӗ те пулма пултараймасть.

Пӗрлешнӗ Королевствӑпа нацисен Британири туслӑхӗн, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Российӑн тата Францин правительствисем, тӗнчери мире юратакан мӗнпур ытти нацисем пулӑшнипе тата вӗсен ячӗпе пӗрлешсе ҫак процесра айӑплакансен тенкелӗ ҫине пӗтӗм тӗнчери ҫыхӑнусене нацистла пӑсакан ҫак пуҫаруҫӑсене тата вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пыраканӗсене лартма шут тытрӗҫ. Эпир ҫакна ҫак айӑпланакансене хӑйсен преступленийӗсемшӗн наказани парас тесе тӑватпӑр. Ҫавӑн пекех тата ҫакна эпир вӗсен мӗнпур ирсӗр ӗҫне тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тесе тӑватпӑр. Пӗтӗм тӗнчери ырлӑха туйса тӑни ҫынсене юлашкинчен ҫакӑн пек ӗҫ мӗн патне илсе пыма пултарнине ӑнланма пулӑшать. Тӗнчере тӳрӗ шухӑша ҫиеле кӑларар, унпа пӗрлех хамӑрӑн пӗр-пӗрин тӗлӗшӗнчи обязательствӑсен тасалӑхне тӳрре кӑларар».

ДЕКАБРӖН 5-мӗшӗнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Трибуналӑн ирхи ларӑвӗнче Америка айӑплаканӗ Олдермен Германи Чехословакие тапӑннине кӑтартакан документсене вуласа парать. Вӑл Судетри нимӗҫсен Генлейн ертсе пынӑ партийӗ Чехословаки государствине сутнине палӑртса парать.

Малалла Олдермен Германири гитлеровецсем Чехословакие темиҫе пая уйӑрса ямалли плана пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен калать. Словаки хӑйне хӑй никама пӑхӑнман ҫӗршыв тесе пӗлтерни—Германири гитлеровецсен ӗҫӗ пулнине кӑтартса парать. Германири гитлеровецсем, хӑйсен Чехословакири агентурипе усӑ курса, Словаки, Чехи тата Моравӗ Чехословакирен уйӑрлни ҫинчен пӗлтернӗ. Айӑплакан Олдермен Англин Прӑгари посланникӗн Ньютонӑн ҫавӑн чухне ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ пулса ӗҫленӗ Галифакс лорд патне 1939 ҫулхи мартӑн 21-мӗшӗнче янӑ ҫырӑвне вуласа парать. Ҫав ҫырура ҫапла каланӑ: Сидор господин Братислава хулине таврӑнсан, мартӑн 11-мӗшӗнче, шӑматкун, каҫхине 10 сехетре Братиславӑри кабинетӑн ларӑвне Бюркель господин, Зейсс-Инкварт тата Германин 5 генералӗ пынӑ, Вӗсем Словаки правительствине Словаки никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑни ҫинчен халех пӗлтерме хушнӑ. Сидор господин пӑртак иккӗленнине курсан, Бюркель господин ӑна ҫапла каланӑ: Гитлер Чехословаки ыйтӑвне татса пама сирӗп шут тытрӗ, тенӗ. Словаки хӑй никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑни ҫинчен халех пӗлтермелле, унсӑрӑн Гитлер унӑн кунҫулӗпе интересленме пӑрахать, тенӗ. Сидор хӑйне ҫапла пӗлтернӗшӗн Бюркеле тав тунӑ, анчах та ҫапла каланӑ: манӑн ҫак лару-тӑру ҫинчен Прӑгари правительствӑпа сӳтсе-явмалла пулать, тенӗ.

Германи ҫарӗсем Чехословакие кӗрсе каяс ӗҫ питӗ хӑвӑрт аталанса пынӑ. Нимӗҫсем Словакири гитлеровецсем валли икӗ урӑ хӗҫпӑшалсем яма пуҫланӑ. Германи хаҫачӗсемпе радио Чехословаки правительствине хирӗҫ вӑйлӑ кампани пуҫласа янӑ. Словакири Квислинг пулса тӑракан Тисона Берлина чӗннӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах гитлеровецсем Чехословакие чуралантарас ӗҫе Венгрие хутшӑнма чӗннӗ. Венгрин ҫавӑн чухнехи пуҫлӑхӗсем, ҫав шутра Венгри регенчӗ Хорти, гитлеровецсен ҫав планӗне питӗ интересленни ҫинчен пӗлтернӗ. Айӑплакан Олдермен Хортин 1939 ҫулхи мартӑн 13-мӗшӗнче Гитлер патне янӑ телеграммине вуласа парать. Ҫав телеграммӑна вара трибунал протоколӗсем ҫумне хушса хурать. Вӑл документа Германин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин архивӗнче тупнӑ. Хӑйӗн телеграмминче Хорти ҫапла ҫырнӑ: «Сирӗн превосходительствӑна эпӗ чунтан-чӗререн тав тӑватӑп. Венгрийӗн питӗ паха пулса тӑракан ҫак йывӑр тапхӑра пуҫӑнса ирттернӗшӗн эпӗ мӗн тери савӑнни ҫинчен сире мӗнле каласа парам-ши! Пирӗн ҫӗнӗ салтаксем ҫара кайни 5 эрне ҫеҫ иртрӗ пулин те, эпир ҫак кампание питӗ хавхаланса хутшӑнатпӑр. Кирлӗ приказсене панӑ ӗнтӗ. Мартӑн 16-мӗшӗнче, кӗҫнерникун, чикӗре хӑшпӗр ӗҫсем пулса иртӗҫ, вара шӑматкун вӑйлӑн пырса ҫапӑпӑр. Сирӗн превосходительство пирӗнпе ҫав тери туслӑ пурӑннине эпӗ нихҫан та манас ҫук. Сирӗн шанчӑклӑ тусӑр Хорти».

Мартӑн 13-мӗшӗнче ирхине Тисо Дурчанскипе тата Кармазинпа пӗрле Берлина пынӑ. Каҫхине ӑна Гитлер йышӑннӑ. Вӗсем пӗр-пӗринпе калаҫса илнӗ. Калаҫнӑ ҫӗрте Гитлерпа Тисосӑр пуҫне тата ҫак ҫынсем пулнӑ: ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Риббентроп, импери министрӗ Мейсснер, генерал Кейтель, статс-секретарь Дитрих, статс-секретарь Кепплер, Словаки министрӗ Дурчанский. Ҫав канашлура мӗн-мӗн каланине ҫырса хунӑ хута Германин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин архивӗнче тупнӑ. Гитлер ҫав канашлура словаксене ультиматум панӑ, вӑл Словаки никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑни ҫинчен халех пӗлтерме хушнӑ.

Гитлер Риббентропран—сирӗн мӗн те пулсан каламалли ҫук-и? тесе ыйтнӑ. Риббентроп Словаки никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑни ҫинчен темиҫе кун хушшинче мар, пӗр-икӗ сехет хушшинчех пӗлтермелли ҫинчен каланӑ. Вӑл Гитлера Венгри ҫарӗсем Словаки еннелле куҫма пуҫлани ҫинчен тин ҫеҫ илнӗ пӗлтерӗве кӑтартнӑ. Гитлер вӑл пӗлтерӗве вуласа тухнӑ та ун ҫинчен Тисона каласа панӑ, Словаки халех решени йышӑнӗ, тесе шанса каланӑ. Тисо Гитлера тав тунӑ, Словакие шанма юрани ҫинчен ӗнентерсе каланӑ, словаксем хӑйсен ҫӗршывӗн интересӗсемшӗн Гитлер «тӑрӑшнине» пысӑк вырӑна хунине кӑтартса парӗҫ, тенӗ.

Калаҫусем ҫакӑнпа пӗтнӗ. Айӑплакан Олдермен вӗсене Германи фашисчӗсем хӑйсен вассалӗсемпе намӑса пӗлмесӗр тата ирсӗр чӗлхепе калаҫнине кӑтартакан канашлу тесе хаклать.

Ҫакӑн хыҫҫӑн, тет Олдермен, Риббентроп патӗнче канашлу пулса иртнӗ. Ҫав канашлура Риббентроп Тисона Словаки «никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑни ҫинчен калакан законӑн» проектне панӑ. Мартӑн 14-мӗшӗнче Тисона Братислава хулине илсе ҫитернӗ. Унта вӑл Словаки «никама пӑхӑнман ҫӗршыв» пулса тӑни ҫинчен пӗлтернӗ.

Черет вара Прагӑна та пырса ҫитнӗ. Гитлер хушнипе Берлина Чехословаки президенчӗ Гаха тата ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Хвалковский пынӑ. Ҫав вӑхӑтрах нимӗҫ хаҫачӗсем чехсене хирӗҫ питӗ нумай ҫырма пуҫланӑ. Нимӗҫсен пропаганди чехсене — нимӗҫсене хӗсӗрлетӗр, тесе айӑпланӑ, Прага Европа чӗринче нимӗҫсене хирӗҫ явнӑ йӑва пулса тӑрать, ӑна пӗтерсе лартмалла, тенӗ.

Айӑплакан Олдермен ҫапла калать: «Германин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин архивӗнче тепӗр питӗ чаплӑ документ тупнӑ. Вӑл документ—Гитлер 1939 ҫулхи мартӑн 15-мӗшӗнче Гаха президентпа калаҫнине ҫырса хунӑ хут. Гитлерла каварлашуҫӑсен провокациллӗ тактикипе пӗтӗм тӗнчери бандитизмне урӑх нимӗнле документ та ҫав тери лайӑх кӑтартса парас ҫук пуль. Вӑл документӑн ячӗ ҫапла: «Фюрерпа рейхсканцлер Чехословаки президенчӗпе Гахапа 1939 ҫулхи мартӑн 15-мӗшӗнче рейхсканцелярире калаҫни, калаҫнӑ ҫӗрте ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Риббентроп тата Чехословакин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Хвалковский пулнӑ». Вӗсем калаҫнӑ ҫӗрте тата генерал-фельдмаршал Геринг, генерал Кейтель, статс-секретарь Вейцзекер, импери министрӗ Мейсснер, статс-секретарь государство советникӗ Хевель пулнӑ. Гитлер ҫапла каланӑ: Чехословаки пирӗн тӗллеве пурнӑҫа кӗртмелли ҫӗршыв пулса тӑрать. Лондон Чехословакие пулӑшма пултараймасть. Чехословаки ӑна кирлӗ мар. Чехословаки Германипе таччӑнрах ҫыхӑнса тӑма тӑрӑшнӑ пулсан, Германин паллӑ обязательствӑсем илмелле пулнӑ пулӗччӗ, анчах та халь эпӗ ҫавӑн пек обязательствӑсем ҫуккишӗн савӑнатӑп, тенӗ. Хвалковскипе калаҫнӑ чухнех Гитлер Чехословакие, вӑл Бенеш тытса пыракан политикӑна улӑштармасан, пӗр шеллемесӗр аркатса тӑкассине пытарман. Хвалковский ҫавна ӑнланса илнӗ те Гитлертан пӑртак тӑхтама ыйтнӑ, тенӗ ҫав хут ҫинче.

Анчах Гитлер ӑна ҫапла каланӑ: темиҫе уйӑх та иртсе кайрӗ, анчах нимӗн те улшӑнмарӗ, тенӗ.

Вара Гитлер, тесе ҫырнӑ ҫав хут ҫинче, Германи ҫарӗсене Чехословакие кӗрсе кайма, Богемипе Моравие Германи империйӗпе пӗрлештерме приказ панӑ».

Мартӑн 15-мӗшӗнче Германи ҫарӗсем Чехословакие кӗрсе кайнӑ. Чехословаки президенчӗ Гаха Гитлера документ панӑ, унта ҫапла каланӑ: «Эпӗ чех халӑхӗпе чех государствин кунҫулне фюрер аллине, Германи империйӗн рейхсканцлерӗ аллине шанса паратӑп», тенӗ.

Богемипе Моравие тытса илсен, Германи вӗсене протекторат туса хунӑ. Ытти ҫӗршывсемпе ҫыхӑнса тӑма чарнӑ. Ытти ҫӗршывсемпе ҫыхӑнса тӑрас ӗҫе хӑй ҫине илнӗ, хӑйӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене вӗсен территорийӗнче вырнаҫтарнӑ. 1939 ҫулхи мартӑн 23-мӗшӗнче Словаки правительствипе Германи договор тунӑ, ҫав договор тӑрӑх Словаки государствин интересӗсене сыхлас ӗҫе Германи хӑй ҫине илнӗ. Тӗрӗссипе ҫакӑ словак халӑхне пӗтӗмпех чуралантарни пулнӑ.

Айӑплакан Олдермен кун хыҫҫӑн Германи фашисчӗсем Чехословакие ҫӑтнипе мӗн пирки тытса илни ҫинчен калать. Ҫав тӗллев—Чехословаки халӑхне чуралантарасси, Чехословакин промышленноҫпа ҫутҫанталӑкри ресурсӗсемпе Германин ҫар хӑватне ӳстерес ӗҫре усӑ курасси, Польшӑна тапӑнма стратегиллӗ майсем хатӗрлесе хурасси пулнӑ.

1939 ҫулхи апрелӗн 15-мӗшӗнче Геринг Муссолинипе калаҫнӑ, унта Чиано та пулнӑ. Геринг ун чухне уҫҫӑнах ҫапла каласа панӑ: Польшӑна тапӑнма меллӗрех условисем тӑвас тесе, Германи Чехословакие тытса илчӗ, тенӗ.

Айӑплакан Олдермен Пӗтӗм тӗнчери ҫар трибуналне Чехословаки влаҫӗсем панӑ документа вуласа парать. Ҫав документ —1945 ҫулхи августӑн 8-мӗшӗнче тӑватӑ аслӑ держава тунӑ килӗшӳре каланӑ тӑрӑх Чехословаки официальнӑй йӗркепе ҫырса панӑ доклад пулса тӑрать. Айӑплакан ҫав документа трибунала парса, вӑл документран тухса тӑракан выводсем ҫинчен каласа парать. Вӑл документран ҫакӑ курӑнать: 1) Генлейн партийӗ Чехословаки республикине тапӑнас ӗҫре Германири национал-социалистсен партийӗпе тата Риббентроппа таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑ; 2) Германин Прӑгари посольстви Чехословакири нимӗҫ фашисчӗсен провокациллӗ ӗҫне ертсе пынӑ; 3) Германин правительство органӗсем, ҫав шутра Прӑгари дипломатиллӗ миссийӗ, ҫав сӑтӑрла ӗҫсем валли укҫа парса тӑнӑ; 4) ҫав Генлейн партийӗ урлӑ нимӗҫ фашисчӗсем Чехословакире саботаж тунӑ тата шпионла ӗҫсем тунӑ.

Германи Чехословакие тапӑнни ҫинчен Олдермен хӑйӗн сӑмахне каласа пӗтернӗ. Айӑплакан ҫапла каланӑ: халь айӑпланакансем Геринг, Кейтель, Йодль ҫав вӑхӑтра Чехословакие вӑрӑ-хурахла тапӑнас ыйтупа пулнӑ канашлусенче пуринче те активлӑ ӗҫленӗ, тенӗ. Ун хыҫҫӑн Англи айӑплаканӗ Дэвид Максуэлл-Файф сӑмах тухса каланӑ. Вӑл гитлерла Германи пӗтӗм тӗнчери договорсене пӑсни ҫинчен каланӑ. Англин ытти айӑплаканӗсем Германи Польшӑна, Данине, Норвегие, Голландие, Бельгие, Люксембурга, Грецие, Югославие тапӑнни ҫинчен каласа парӗҫ, унтан Америка айӑплаканӗ Олдермен Англипе Америка айӑплакансен ячӗпе, Германи Совет Союзне тата США-на тапӑнни ҫинчен каласа парӗ.

Англи айӑплаканӗ Максуэлл-Файф Германи захватчикӗсем тӗнчери мӗнле-мӗнле договорсене пӑсни ҫинчен калама пуҫланӑ.

ДЕКАБРӖН 5-мӗшӗнчи КАҪХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери ҫар трибуналӗн каҫхи ларӑвӗнче Англи айӑплаканӗ Дэвид Максуэлл-Файф фашистла каварлашуҫӑсем пӗтӗм тӗнчери договорсене мӗнлисене пӑсни ҫинчен каласа панӑ. Ҫав договорсем хушшинче вӑл союзлӑ державӑсен 1919 ҫулта тунӑ договорне аса илнӗ. Ҫав договорӑн Германие Рейн шывӗ хӗрринче укрепленисем тума, ҫав районра хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем усрама е вӗсене унта пухса тӑратма, ҫавӑн пекех тата унта маневрсем тума чаракан параграфӗсемпе статьисене илсе кӑтартнӑ.

Айӑплакан ҫав договорӑн пӗр статьине уйрӑмах хытӑ палӑртать. Вӑл статьяра ҫапла каланӑ: ҫапла тума чарнине Германи итлемесен, вӑл тӑшманла ӗҫ тӑвать, тенӗ. Айӑплакан тата договорӑн ҫак статьисене илсе кӑтартать: Германи Австрин никама пӑхӑнманлӑхне хисеплесе йышӑнать, Германи Данциг территорийӗ тӗлӗшпе хӑйӗн прависемпе полномочийӗсене пӑрахать, вӑл Чехословаки государстви никама пӑхӑнман ҫӗршыв пулса тӑнине йышӑнать, тесе калакан статьисене илсе кӑтартать.

Айӑплакан малалла Гитлерӑн Мемель пирки тунӑ декларацийӗ ҫинчен калать. Ҫав деклараципе—Германи Мемеле тытса илме шутламасть, тенӗ. Айӑплакан ҫавӑнтах 1939 ҫулхи апрель уйӑхӗнче гаулейтер Эрих Кох Мемель хулине Хӗвелтухӑҫ Пруссин хулисен шутне кӗртнине аса илтерет. Англи айӑплаканӗ малалла Гитлерӑн Германи халӑхне 1939 ҫулхи мартӑн 15-мӗшӗнче чӗнсе каланӑ сӑмахне илсе кӑтартать. Унта Гитлер намӑса пӗлмесӗр ҫапла каланӑ: эпӗ Чехословакири нимӗҫсене хӳтӗлесшӗн, ҫавӑнпа ҫеҫ эпӗ Германи ҫарӗсене Богемипе Моравие кӗрсе кайма «ирӗк патӑм», тенӗ. Айӑплакан ҫав документ ҫумне Гитлерӑн ҫарсене Чехословакие кӗрсе кайма хушакан приказне, ҫавӑн пекех тата протекторат тӑвасси ҫинчен калакан декретсене хушса хума ыйтать.

Айӑплакан малалла Германи Мюнхенри килӗшӗве пӑснине хирӗҫ Англипе Франци правительствисем протестленине илсе кӑтартать.

Айӑплакан Версальти договорӑн статьисене иле-иле кӑтартать. Ҫав статьясенче Германин хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене 100.000 ҫынна ҫитиччен чакармалли ҫинчен (ҫак хисепе офицерсем те, пулӑшакан персонал та кӗрет) Рейнран хӗвелтухӑҫнерехри районра фортсемпе укрепленисене пӗтерсе лартмалли ҫинчен, тинӗсри вӑйсемпе флот кадрӗсен хисепне чакармалли ҫинчен, ҫар авиацийӗ тытса тӑма чармалли ҫинчен каланӑ. Айӑплакан малалла Германи пӗтӗмӗшле ҫар повинноҫӗ туса хуни ҫинчен тата ҫӗнӗрен сывлӑш-ҫар вӑйӗсем туса хуни ҫинчен официальнӑй йӗркепе пӗлтернисене ҫав документсем ҫумне хушса хума ыйтать.

Максуэлл-Файф малалла Германи Локарнӑра тунӑ договорсене, уйрӑм илсе кӑтартсан, Германипе Бельги тата Франци хушшинчи чикӗсене ӗмӗрлӗхе туса хурасси ҫинчен, Германипе Чехословаки хушшинчи тавлашуллӑ ӗҫсене арбитраж йӗркипе татса парасси ҫинчен калакан договорсене, ҫавӑн пекех тата Германипе Бельги хушшинчи тата Германипе Польша хушшинчи арбитраж ҫинчен калакан конвенцие илсе кӑтартать.

1927 ҫулхи сентябрӗн 24-мӗшӗнче Нацисен Лигин ассамблейи агрессиллӗ вӑрҫӑсене ӗмӗрлӗхех чарса лартни ҫинчен савӑнса пӗлтернӗ, тет айӑплакан. Германи ун чухне Нацисен Лигин членӗ пулнӑ. Ҫавӑнпа Нацисен Лиги ҫапла пӗлтернине айӑплакан документ вырӑнне хурса йышӑнма ыйтать. Вӑл тата айӑпланакансен ӗҫӗ ҫумне Келлог—Бриан пактне хушса хума сӗнет.

10 минутлӑх перерыв хыҫҫӑн Англи айӑплаканӗ Джонс полковник фашистла каварлашуҫӑсем Польшӑпа, Франципе тата Англипе вӑрҫма хатӗрленнине документсемпе кӑтартса парать. Вӑл Германипе Польша Локарно хулинче арбитраж ҫинчен тунӑ договора аса илет. Вӑл тата Германипе Польша пӗр-пӗрне тапӑнмалла марри ҫинчен 1934 ҫулта тунӑ договора илсе кӑтартать. Ҫав договора 10 ҫуллӑха тунӑччӗ, тет Джонс полковник, анчах та Германи 1939 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗнче Польшӑна тапӑнчӗ.

Айӑплакан малалла Польшӑпа хирӗҫме пӑрахасси ҫинчен, Польшӑпа Германи хушшинчи экономикӑллӑ ҫыхӑнусене икӗ ҫӗршывӑн та усӑллӑ туса аталантарса пыма хатӗрри ҫинчен Гитлер темиҫе хут та шантарса каланине аса илтерет. Гитлер вӑл ытти ҫӗршывсем Германи пирки ан иккӗленччӗр тесе ҫеҫ ҫавӑн пек шантарса каланӑ тата обязательствӑсем илнӗ. Тӗрӗссипе илсен, Германире вӑрҫӑ пуҫлама пур енчен те хатӗрленнӗ. Джонс полковник фон Бломбергӑн 1937 ҫулта панӑ приказне илсе кӑтартать. Ҫав приказра Бломберг вӑрҫа хатӗрленме хушнӑ, вӑрҫа вӑрттӑн хатӗрленмелле тата икӗ фронтра ҫапӑҫмалла пулассине шута илмелле, тенӗ.

Пӗтӗм тӗнчери ҫар трибуналӗн каҫхи ларӑвӗ ҫакӑнпа пӗтнӗ.

ДЕКАБРӖН 6-МӖШӖНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Декабрӗн 6-мӗшӗнчи ирхи ларура трибунал председателӗ лорд Лоуренс ҫапла пӗлтернӗ: трибунал декабрӗн 20-мӗшӗнчен пуҫласа январӗн 2-мӗшӗччен перерыв тума шутлать, тенӗ. Америкӑн тӗп айӑплаканӗ Джексон ҫапла каланӑ: эпӗ перерыв срокне хирӗҫ каласшӑн, тенӗ, анчах хӑй мӗн калассине пӗлтермен.

Ун хыҫҫӑн Англи айӑплаканӗ Джонс подполковник Германи Польшӑна тапӑнни ҫинчен каланӑ. Тӗрлӗ документсемпе усӑ курса, Джонс Германи Польшӑна малтан шухӑшласа хунӑ тӑрӑх тапӑннине кӑтартса парать. Гитлерла Германин руководителӗсем Польшӑна—эпир сирӗнпе 1934 ҫулта тунӑ договора пурнӑҫа кӗртсе пырӑпӑр, тесе шантарса каланӑ вӑхӑтрах Польшӑна тапӑнма хатӗрленнӗ, тет Джонс. Германи, Польшӑна тапӑнмалли сӑлтав вырӑнне хурса, Данциг ыйтӑвӗпе усӑ курнӑ. Айӑплакан ҫапла калать: Германин чӑн-чӑн тӗллевӗ Польшӑна тытса илесси пулнӑ, Данциг ыйтӑвне татса парасси ҫеҫ пулман. 1938 ҫул пӗтеспе гитлерла Германин пуҫлӑхӗсем Данциг ыйтӑвне малти вырӑна хума пуҫланӑ.

Айӑплакан 1939 ҫулхи январӗн 5-мӗшӗнче Берхтесгаден хулинче Бекпа Гитлер калаҫнине ҫырса хунӑ хута вуласа парать. Бек Гитлерпа калаҫнӑ ҫӗрте Риббентроп, Мольтке, Липский тата граф Михаил Лубенской пулнӑ. Гитлер Бека ҫапла каланӑ: Данциг Германи хули пулса тӑрать, ҫавӑнпа ӑна Германи империне таврӑнса памалла. Ҫак ыйтӑва Польшӑпа Германин интересӗсене сыхлакан килӗшӳ туса татса памалла. Эпӗ Францие Эльзаспа Лотаринги пирки, Италие—Бреннер пирки сӑмах панӑ пекех, Польшӑна та сӑмах пама пултаратӑп, тенӗ. Вӑл Германипе Хӗвелтухӑҫ Прусси пӗр-пӗринпе ирӗклӗн ҫыхӑнса тӑмалли ҫинчен каланӑ. Бек господин ҫапла каларӗ,—тесе ҫырса хунӑ ҫав хут ҫинче:—Данциг ыйтӑвӗ вӑл питӗ йывӑр ыйту. Эсир Польшӑна Данциг вырӑнне мӗн парасси ҫинчен каламастӑр. Польша халӑхӗ ҫав ыйтупа питӗ хытӑ интересленет, тенӗ. Гитлер ҫакна хирӗҫ ҫапла каланӑ: ҫак ыйтӑва татса памашкӑн ҫӗнӗ меслетсемпе формӑсем тупмалла, ҫав меслетсемпе формӑсем Германи халӑхӗн интересӗсене те, Польша интересӗсене те пурнӑҫа кӗртме май памалла, тенӗ. Юлашкинчен канцлер ҫапла каланӑ: Данцигра кӗтмен ҫӗртен нимӗн те сиксе тухмӗ, Польша правительствине кансӗрлес тесе унта нимӗн те тумӗҫ, тенӗ.

Германи Польша тӗлӗшпе усал та ирсӗр политика тытса пыни ҫинчен каласа, айӑплакан малалла Риббентропӑн 1939 ҫулхи январӗн 25-мӗшӗнче Варшава хулинче каланӑ сӑмахне илсе кӑтартать (Риббентроп ун чухне Германи поляксемпе туслӑ пурӑнасси ҫинчен каланӑ), ҫавӑн пекех тата Гитлерӑн 1939 ҫулхи январӗн 30-мӗшӗнче Рейхстагра каланӑ сӑмахне илсе кӑтартать (Гитлер хӑйӗн сӑмахӗнче Пилсудские мухтанӑ). Унтан айӑплакан Англипе Франци 1939 ҫулта Польшӑна хӳтӗлеме сӑмах панипе ҫыхӑнса тӑракан фактсем ҫинчен калать тата Чемберлен общинӑсен палатинче каланӑ сӑмахӗн хӑшпӗр вырӑнӗсене вуласа парать. Йышлӑ документсемпе усӑ курса, Джонс Германи Польшӑна тапӑнмалли плана 1939 ҫулхи ҫуркунне тӗлне пӗтӗмпех хатӗрлесе ҫитернине кӑтартса парать. Польшӑна тапӑнмалли плана айӑпланакан Кейтель ертсе пынипе туса хатӗрленӗ.

Англи Польшӑна хӳтӗлесси ҫинчен каласа панӑ пирки Германи правительстви Польшӑна—1934 ҫулхи договора пӑсрӑр, тесе айӑплама пуҫланӑ. 1939 ҫулхи апрелӗн 28-мӗшӗнче Германи правительстви Польша правительствине меморандум янӑ.

Айӑплакан ҫав меморандумӑн ҫак вырӑнне вуласа парать: «Ҫапла ӗнтӗ, 1934 ҫулхи декларацие пичетлесе кӑларнӑ хыҫҫӑн 5 ҫултан Польша Великобританипе союзлӑ пулса тӑнине, политика енчен илсен, Польшӑпа Францин союзлӑ договорӗпе килӗштерме ҫук. Великобританипе союз туса, Польша правительстви хӑйне хӑй Германие хупӑрласа илме тӑрӑшакан политикӑна пӑхӑнтарчӗ», тенӗ меморандумра.

Польшӑна тапӑнма хатӗрленнипе пӗрлех Германи Англипе Францие те тапӑнма палӑртса хунӑ, тет айӑплакан. Августӑн 12-мӗшӗпе 13-мӗшӗнче Гитлерпа Риббентроп Обер-Зальцбург хулинче Италин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗпе Чианопа калаҫнӑ. Вӗсем ун чухне Европӑри тата пӗтӗм тӗнчери политикӑллӑ лару-тӑру ҫинчен сӳтсе-явнӑ.

Польша ҫарӗ питӗ тӗрлӗ, тенӗ Гитлер. Парада ҫӳремелли хӑшпӗр дивизисемпе пӗрлех унта начар дивизисем те пур. Хӑйне хӑй танксем тапӑнассинчен тата сывлӑшран тапӑнассинчен хӳтӗлес тӗлӗшпе Польша хальхи вӑхӑтра питӗ вӑйсӑр, ӑна хальхи вӑхӑтра Франци те, Англи те пулӑшма пултараймаҫҫӗ. Анчах та Польша хӗвеланӑҫӗнчи державӑсенчен пулӑшу нумай вӑхӑт хушши илсе тӑрсан, Германи Польшӑран вӑйлӑрах пулни майӗпен чакса пырӗ.

Вӑтаҫӗр тинӗс районӗ Итали интересӗсен районӗ пулса тӑнӑ пекех, хӗвелтухӑҫпе ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ, ҫав шутра Балтика тинӗсӗ ҫумӗнчи ҫӗршывсем, Германие итлесе тӑракан ҫӗршывсем пулмалла, тенӗ Гитлер. Экономика енчен пӑхсан, Германие ҫав хӗвелтухӑҫӗнчи районсенчи апат-ҫимӗҫпе вӑрман пуянлӑхӗ кирлӗ.

Чиано Гитлера ҫапла каланӑ: ҫакна Итали пӗртте кӗтмен. Миланра калаҫнӑ чухне те, Берлинра калаҫнӑ чухне те Германи представителӗсем Польша пирки ыйту ҫавӑн пек ҫивӗчленсе кайни ҫинчен пӗр сӑмах та каламарӗҫ. Ку ҫеҫ те мар, Риббентроп ун чухне ҫапла каларӗ: Данциг ыйтӑвне майӗпен татса пырӑпӑр, терӗ. Муссолини шухӑшӗпе, хӗвеланӑҫӗнчи державӑсемпе хирӗҫмелле пулатех, ҫавӑнпа та вӑл ҫав вӑхӑта хатӗрленме кирлӗ тесе шутлать. Муссолини хӑйӗн планӗсене икӗ ҫуллӑха е виҫӗ ҫуллӑха туса хунӑ. Чи ҫывӑх вӑхӑтрах хирӗҫсе каймалла пулсан, Муссолини Германи майлӑ пулать, анчах та вӑл, тӗрлӗ сӑлтавсене шута илсе, хӗвеланӑҫӗнчи державӑсемпе каярахпа тин хирӗҫмелле тӑвасчӗ тесе тӑрӑшать, тенӗ Чиано. Ҫапла каласан, Чиано пӗтӗм Европӑра вӑрҫӑ сиксе тухас пулсан Итали позицийӗ мӗнле пулмаллине карта ҫинче кӑтартса панӑ; Польшӑпа вӑрҫсан, пӗтӗм Европӑри вӑрҫӑ пуҫланса каятех, тенӗ. Гитлер ӑна ҫапла каланӑ: «Польша ыйтӑвне татса парассине кая хӑварма юрамасть», тенӗ.

Чиано Гитлертан—Данциг ыйтӑвне хӑҫан татса парӑр? тесе ыйтнӑ. Гитлер ҫапла ответленӗ: вӑл ыйтӑва август уйӑхӗ пӗтеспе татса парӑпӑр, тенӗ.

Айӑплакан малалла Гитлерӑн Обер-Зальцбург хулинче августӑн 22-мӗшӗнче Германи генералӗсем умӗнче туса каланӑ икӗ сӑмахне илсе кӑтартать. Пӗр сӑмахӗнче Гитлер ҫапла каланӑ: «Польшӑна аркатса тӑкасси—пӗрремӗш тӗллев пулса тӑрать, пирӗн тӗллев пӗр-пӗр тӗле ҫитесси мар, Польша ҫарӗсене пӗтерсе тӑкасси пулать. Хӗвеланӑҫӗнче вӑрҫӑ сиксе тухсан та чи малтан Польшӑна пӗтерсе тӑкмалла. Ҫак ӗҫе, сезонне кура, питӗ хӑвӑрт туса ирттермелле. Вӑрҫӑ пуҫламашкӑн эпӗ хам пропагандӑлла сӑлтав тупса парӑп. Ҫав сӑлтава ӗненӗҫ-и, ӗненмӗҫ-и—вӑл пӗртте паха мар. Ыттисене ҫӗнтернӗ ҫӗршывран кайран—эсӗ тӗрӗс каларӑн-и, тӗрӗс каламарӑн-и? тесе никам та ыйтас ҫук. Вӑрҫӑ пуҫланӑ чухне право ҫинчен мар, ҫӗнтересси ҫинчен калаҫҫӗ. Шеллесе тӑмалла мар, питӗ хаяр пулмалла».

Польшӑпа Германи чиккинче вара хирӗҫтерекен ӗҫсем сиксе тухнӑ. Айӑплакан малалла Лахузен генерал-майор каласа панине илсе кӑтартать. Лахузен Германи контрразведкине Польша салтакӗсен тумтирӗсене тупма, унтан, Германин концентрациллӗ лагерӗсене политикӑллӑ ӗҫсемшӗн хупнӑ ҫынсене ҫав тумтире тӑхӑнтарса, нимӗҫсене тапӑнма тата Германипе Польша чиккинче хирӗҫтерекен ӗҫсем туса ирттерме хушни ҫинчен каласа панӑ.

Айӑплакан трибуналӑн протоколӗ ҫумне тата Канарисӑн меморандумне хушса хунӑ.

Унтан вӑл Англи Германи агрессине чарма тӑрӑшнине кӑтартса памашкӑн темиҫе документ вуласа панӑ.

Ирхи лару ҫакӑнпа пӗтнӗ.

* * *

САЙГОНА ФРАНЦУЗСЕН ҪӖНӖ ЧАҪӖСЕМ ПЫНӐ

ПАРИЖ, декабрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Парижри радио ҫапла пӗлтерет: Индо-Китайӑн тӗп хулине Сайгона Америкӑн 8 транспорт судни пынӑ. Вӗсем унта француз салтакӗсене илсе пынӑ. Ҫав салтаксен ҫавӑнти пӑлхавҫӑсемпе ҫапӑҫмалла пулать.

ЛОНДОН, декабрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио ҫапла пӗлтерет: Индо-Китайра Франци ҫарӗсем Сайгонран 200 миля ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре аннамитсен оборонине ҫӗмӗрнӗ. Англипе Франци пӗлтернинче каланӑ тӑрӑх, Франци ҫарӗсем аннамитсене пысӑк ҫухату тӳстернӗ.

* * *

Юлашки почтӑран

Пӗтӗ кӗрсесем пирки мар кунта...

Калинино районӗнчи «Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн ноябрӗн 22-мӗшӗнче тухнӑ номерӗнче «Кӗрсесене хӑм пӑрахассинчен сыхласси» темӑпа консультаци пама шухӑшланӑ. Хирӗҫместпӗр, кирлӗ тема, кирлӗ статья тейӗпӗр. Колхозниксене пӗтӗ кӗрсесене пӑхасси ҫинчен ӑнлантарнинче, паллах, усалли нимӗн те ҫук. Анчах мӗнле ӑнлантарнӑ-ха ҫак ыйтӑва?

«Пӗтӗ кӗрсесене ҫамӑр усрамалла, уйрӑм, ҫутӑ таса комнатӑсене (?) вырнаҫтармалла, комнатӑри температурӑпа танлашакан ӑшӑ шыв ӗҫтермелле, кӑвакарса пӑсӑлнӑ апата парас ҫук», тенӗ хаҫатра.

Ку таранччен эпир лашасене (вӑл шутра пӗтӗ кӗрсесене те) витере усраҫҫӗ тесе шутланӑччӗ. «Коммунизм ялавӗ» хаҫатӑн ответлӑ редакторӗшӗн алӑ пуснӑ В. С. Зайцев юлташ апла шутламасть иккен?! Вӑл кӗрсесене «комнатӑна» илсе кӗртет пулсан, лаша витинче камсене усрас тесе шутлать-ши?

Кузьма Прутков тахҫанах ҫапла каланӑ: «Сӳпӗлти ҫын сехет маятникӗ евӗрлӗ: ӑна та, кӑна та чармалла», тенӗ. «Коммунизм ялавӗ» хаҫата алӑ пусса кӑларакан Зайцев пирки каламан-ши вӑл ҫак сӑмаха?

Ответлӑ редактор
заместителӗ Н. С. СТЕПАНОВ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Промкоопераци управленине ҫакӑн пек работниксем кирлӗ: ҫӗвӗ ҫӗлекен промышленность тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, трикотаж промышленноҫӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, тир-сӑранпа атӑ-пушмак промышленноҫӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, ҫӑматӑ промышленноҫӗ тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, капитальнӑй строительство тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, йывӑҫ каскалас ӗҫе пӗлекен инженер, вӑрманпа усӑ курас тӗлӗшпе ӗҫлекен инженер, инженер-экономист, бухгалтер-ревизор, юрисконсульт, аслӑ экономист-финансист, апат-ҫимӗҫ промышленность ушкӑнӗн руководителӗ.

Ӗҫукҫине калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх тӳлеҫҫӗ. 2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн—0-67, заместителӗн —89, секретариатӑн—4-26, пропаганда пайӗн—2-39, парти пурнӑҫ пайӗн—3-97, промышленность пайӗн—3-99, ялхуҫалӑх пайӗн—3-99, рабселькорсен пайӗн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00690 Типографи № 1 Управлени полиграфи промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.